Асрах çав çулсем

Çăмăллăн килмерĕ Çĕнтерӳ

Пирĕн çĕршыври халăха хăйĕн чури тăвас тĕллевпе Германи патшалăхĕн пуçлăхĕ пулнă Гитлер Совет Созĕпе мирлĕ пурнăçшăн тунă килĕшĕве сĕмсĕррĕн пăсса, хăйĕн малтанах хатĕрленĕ йышлă та вăйлă çарне 1941 çулхи июнь уйăхĕн 22-мĕш кунĕнче пирĕн çыршыва вăрçăпа кĕртсе ярать. Çапла вара пирĕн çăршывăн Хĕвел анăçĕнче пилĕк пин çухрăма яхăн сарлакăш хăрушă фронт пулса тăрать. Тăван çĕршыва çăлса хăварас тĕллевпе тата Гитлерăн чури пулас мар тесе, совет халăхĕ тата унăн çарĕ тăшмана хирĕç 1418 кун паттăррăн çапăçса калама çук пысăк çĕнтерӳ тăваççĕ.

Вăрçă пуçланнă малтанхи кунсене эпĕ лайăх астăватăп. Вăл вăхăтра эпĕ трактор бригадинче ĕçленĕччĕ. Ирхи çĕртме сухи сухалана. 1941 çулхи июнь уйăхĕн 22-мĕшĕнчи каçхине çур çĕр çитес умĕн эпир сухалана вырăна Шупашкартан çăмăл автомашинăпа республика çар комиссариатĕнчен килнĕскерсем иккĕн пире ĕçлеме чарса çапла каларĕç: "Вăрçă пуçланнă, Германи патшалăхĕн самолечĕсем пирĕн хуласем çине халĕ бомбăсем пăрахаççĕ. Çутăлма пуçласан çĕр çинче те çапăçусем пуçланчĕç. Сирĕн гусеницăллă трактора эпир вăрçă хирне валли илсе кайма килтĕмĕр". Трактора та, трактористне те илсе кайрĕç вĕсем. Ним тума аптăранипе ĕçе пăрахсах эпир яла чупрăмăр. Вăрманпа пыратпăр. Вăрманти кайăксем юрласа чуна савăнтараççĕ. Унтан тухсан анлă улăхпа пыратпăр. Улăхра тĕрлĕрен чечексем паха шăршă кăлараççĕ. Вĕсем çине пăхсан, чун савăнать, хĕпĕртет. Çанталăкĕ çав тери илемлĕ вара. Камăн вилес килĕ-ха çавăн пек илемлĕ вăхăтра.

Яла çитрĕмĕр. М. Валежников бригадир, вăрçă тухнине пĕлменскер, çавасене туптаса утă çулма тухма хатĕрленме колхозниксене пĕлтерсе çÿрет. Пирĕн ялта çĕр виçекен (землемер) А. Демьяновăн антенăллă радио пурччĕ (ун чухне ялсенче радио пулман). Пăхатăп та, ун патне колхозниксем радио итлеме пухăннă. Эпĕ те вĕсем патĕнче чарăнса тăтăм. Ирхине тăхăр сехетре Совет Союзĕн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă В. Молотов Совет халăхне радиопа хурлăхлăн çакна пĕлтерчĕ: "Германи патшалăхĕн çарĕ мирлĕ пурăнмалли килĕшĕве сĕмсĕррĕн пăсса пирĕн çĕршыва вăрçăпа килсе кĕчĕ. Вăхăтлăха пирĕн çарсем Хĕвел тухăçнелле чакса пыраççĕ. Апла пулин те хаяр та вăйлă тăшмана эпир çĕнтеретпĕрех".

Çав кунах вăйпитти çамрăк арçынсем патне вăрçă хирне тухса каймалли пирки хутсем килме пуçларĕç. Ялта макăрашупа салтак юррисем янăрама пуçларĕç. Кунне ялтан çирĕмвăтăр çын чухлĕ вăрçă хирне ăсатнисем пулчĕç. Утă çулма тухма хатĕрленнĕ колхозниксем вăрçă шухăшне куçрĕç. Пулса çитнĕ пуян тыр-пула пуçтарса илесси те пĕтĕмпех ватăсемпе ачасем çинче кăна юлчĕ. Çапла вăл, вăрçă çухатусăр пулмасть. Нумаях та вăхăт иртмест, вăрçă хирĕнчен яла вилни çинчен пĕлтерекен хутсем килме пуçларĕç. Каллех ялта макăру.

Тӳреммĕн каласан, пирĕн çĕршыв вăл вăхăтра вăрçа хатĕрленмен. Германи патшалăхĕпе мирлĕ пурăнма тунă килĕшĕве ĕненнĕ тата шаннă. Хĕвел анăçĕнчи çĕршывăн чиккисене кирлĕ чухлĕ çирĕплетеймен. Çавна пула ĕнтĕ Гитлерăн çарĕ пирĕн çĕршыва хăвăрт кĕрсе пычĕ. Пирĕн Тăван çĕршывăн чĕрине – Мускава ярса илес тĕллевпе Гитлер хăйĕн вăйлă çарне Смоленск – Мускав çулĕпе кĕртсе ярать. 1941 çулхи сентябрь уйăхĕнче нимĕçсен çарĕ Мускавран çирĕм ултă çухрăмра кăна тăрать. Ку вăл Мускавшăн питĕ хăрушă вăхăт пулнă. Уйрăмах В. Панфилов генералăн дивизийĕн Мускава хÿтĕлеме тÿр килнĕ. Мускавшăн паттăррăн çапăçса дивизире 15 пин салтакран 28 тăрса юлать. В. Панфилов генерал хăй те Мускавшăн пынă çапăçура паттăрсен вилĕмĕпе вилет. Апла пулин те тăшман Мускава кĕреймест. Çапла вара 1941 çулхи ноябрь уйăхĕнче Мускавра Гитлер хăйĕн çарĕпе парад иртперес шухăша пурнăçа кĕртеймест. Мускавшăн пурнăçа шеллемесĕр паттăррăн çапăçаççĕ В. Панфилов генералăн салтакĕсем. Акă дивизири пĕр политрук нимĕçсен танкĕсем йышлăн килнине пăхса салтаксене çапăçăва чĕнсе çапла калать: "Сарлака Тăван çĕршывăмăр, анчах та каялла чакма пире валли вырăн çук. Пирĕн хыçра – Мускав". Политрукăн çулăмлă сăмахĕсем пĕтĕм фронтĕпе саланнă, тăшманпа паттăррăн çапăçма салтаксене вăй хушнă.

1941 çулхи декабрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче, тарăн юра тата вăйлă сивĕсене пăхмасăр (вăл вăхăтра сивĕ хĕрĕх градусран та иртнĕ), пирĕн çарсем Гитлерăн çарне Мускав патĕнчен каялла, Хĕвел анăçнелле хăвалама пуçласçĕ. Гитлер çарĕ хăйпе пĕрле илсе килнĕ вăрçă техникине пăрахса хăварсах каялла тарма тытăнать. 1942 çулхи март уйăхĕ тĕлне нимĕç çарĕсем Мускав патĕнчен 250-300 çухрăм таранах каялла чакса çирĕпленсе лараççĕ.

Мускав çине тапăннипе ĕç тухманнине кура 1942 çулта çуллахи ăшă кунсем килсен Гитлер хăйĕн вăйлă хатĕрленĕ çарне пирĕн Ростов хули патĕнчи çирĕплетнĕ района çĕмĕрсе Сталинград хули патне кĕртсе яма вăй çитерет. Унăн тĕллевĕ Сталинград хулине кĕрсе хăйĕн çарне Атăл урлă хăпартса Мускава хыçал енчен тытса илесси пулнă. Анчах та унăн тискер шухăшне пурнăçлама ирĕк памарĕç пирĕн çарсем. Гитлерăн салтакĕсем пĕр вырăнта Атăл урлă каçма ĕлкĕрнĕ. Вĕсене пирĕн салтаксем çав вырăна вăхăтра çитсе Атăла чăмтарнă.

Сталинград патĕнче питĕ хаяр çапăçусем пулса иртеççĕ. Сталинград патĕнчи хаяр çапăçусенче пирĕн çарсем хулана çавăрса илсе тăшманăн 330 пин салтакне, 2500 офицерне тата 24 генералне тыткăна илеççĕ.

Çакăн хыççăн Кавказа ирĕке кăларассишĕн калама çук хаяр çапăçусем пулса иртеççĕ. Курск пĕккинчи çапăçусем уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса иртрĕç. Гитлер планĕнче Курск хули патĕнче пирĕн çарсен пысăк пайне хупăрласа илсе пирĕн çарсене ертсе пыракансем умне ультиматумла требовани лартса, вăрçа вăхăтлăха чарса лартасси пулнă. Нимĕç физикĕ атом бомбине хатĕрлессипе тимлесе ĕçленĕ. Гитлер пире атом бомбипе çĕнтересшĕн пулнă.

Анчах та Гитлерăн ĕмĕчĕ пурнăçланаймарĕ. Эпир çĕнтертĕмĕр.

В. ИВАНОВ,
Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ.

Кашмаш ялĕ.

Асăну

Вĕсен ячĕсем яланах асра

Пирĕн Кĕртекасси ялĕ пысăках мар. Пĕтĕмпе 40 хуçалăх патнелле. 7–8 çурчĕ пушах ларать. Çак пĕчĕк ялтан Аслă Отечественнăй вăрçа Тăван çĕршыва хÿтĕлеме 34 çын тухса кайнă. 20 çын вăрçă хирĕнчен каялла таврăнайман, ĕмĕрлĕхех аякри çĕрте пуçĕсене хунă.

Пирĕн ялта çуралса ÿснĕ 20 çынна Асăну кĕнекине кĕртнĕ. Хăшĕсен тăванĕсем, ачисем, мăнукĕсем, тус-юлташĕсем вĕсем пирки пĕлмеççĕ те пулĕ. Çавăнпа та вĕсене ятранах асăнма кăмăл пур. Кусем вĕсем Иван Трофимович Трофимов, Игнат Васильевич Васильев, Иван Васильевич Васильев, Митрофан Александрович Александров, Ерофей Андреевич Андреев, Петр Арсентьевич Арсентьев, Андрей Никандрович Никандров, Федот Никандрович Никандров, Филипп Никифорович Никифоров, Владимир Миронович Миронов, Владимир Яковлевич Яковлев, Сергей Хрисанович Хрисанов, Герасим Хрисанович Хрисанов, Иван Пахомович Пахомов, Анатолий Давыдович Давыдов, Василий Петрович Петров, Григорий Николаевич Офаринов, Семен Никандрович Розомов, Иван Никандрович Розомов, Владимир Ильич Ильин.

Сăмахăма çапла вĕлес килет. Иртнĕ вăрçăра пуç хунă паттăрсен ячĕсене нихăçан та манас марччĕ. Пирĕн паянхи кун-çулăн хăйсен пурнăçне шеллемен вĕсем. Яланах упрар вĕсен ячĕсене хамăр чĕрере. Тискер вăрçă вара тек ан пултăр нихăçан та. Яланах тÿпе таса та çутă пулинччĕ.

П. ИВАНОВСКИЙ.

Кĕртекасси ялĕ.

Ĕç тăвакан уголовлă инспекци ĕçченĕсен уявĕ

Йĕркелĕхшĕн тăрăшаççĕ

Майăн 7-мĕшĕнче кăçал пирĕн çĕршывра пĕрремĕш хут Ĕç тăвакан уголовлă инспекци ĕçченĕсен кунне паллă турĕç. Наказанисене пурнăçлаттаракан федераллă служба çак ĕçе ахальтен туса ирттермен.

Шăпах ĕнтĕ 1919 çулхи майăн 7-мĕшĕнче РСФСР юстицин Халăх комиссариачĕн 38 № циркулярĕпе юстицин кĕпĕрнесенчи тата облаçсенчи пайĕсенче ирĕксĕрлесе ĕçлеттерекен бюросем туса хунă. Вĕсем ирĕкрен хăтарассипе çыхăнман уголовлă наказанисене ирĕксĕрлесе пурнăçлаттарассипе ĕçленĕ.

Хальхи вăхăтра Чăваш Республикин территорийĕнче районсенчи 25 ĕç тăвакан уголовлă инспекци шутланать. Вăл шутран районсем хушшинчисем – 3. Сотрудниксен штатпа пăхнă шучĕ – 90 çын. Ку инспекцисем республикăри пур хуласемпе районсенче те пур. Вĕсем ĕçлесе юсанассипе, ирĕксĕрлесе ĕçлеттерессипе, ку е вăл должноçа йышăнассинчен е ку е вăл ĕçпе ĕçлессинчен хăтарнипе çыхăннă наказанисене пурнăçлаттарас тивĕçе пурнăçлаççĕ, условнăй майпа айăпланисем, айăпланă çие юлнă хĕрарăмсем, çул çитмен ачалла хĕрарăмсем, айăплав вăхăтне каярах срока тăснисем хăйсене мĕнле тытнине тĕрĕслесе тăраççĕ. Айăпланă çул çитмен çамрăксене тĕрĕслесе тăрасси те инспекци тивĕçĕ шутне кĕрет. Малашне вара, кирлĕ условисене хатĕрлесе çитерсен, федераллă саккунпа ирĕке чикĕлессипе те айăплавсем пурнăçлаттарма тивет.

2007 çулта республикипе айăпланисем ĕç тăвакан уголовлă инспекцисенче учетра 5788 çын пулнă. Обществăлла йĕркелĕхе çирĕплетес тата преступленисем тăвассипе кĕрешес тĕллевпе юлашки вăхăтра çирĕпрех мерăсем те йышăнма тивет. Акă пĕрремĕш кварталта ĕçлесе юсанассипе çыхăннă 92 наказание, обязательнăй ĕçпе çыхăннă 14 наказание ирĕкрен хăтарассипе улăштарнă. Условнăй майпа айăпланипе çыхăннă 117 ĕçе те çĕнĕрен пăхса тухма тивнĕ. Пĕтĕмпе 223 çынна ирĕкрен хăтарнă.

Пирĕн районти ĕç тăвакан уголовлă инспекци ку енĕпе епле ĕçлесе пырать-ха? Кун пирки эпĕ районти ĕç тăвакан уголовлă инспекци пуçлăхне, шалти службăн подполковникне В. Кожевникова каласа пама ыйтрăм:

– Районĕпе кăçалхи 4 уйăхра айăпланисене инспекцире пĕтĕмпе 171 çынна шута илнĕ. Вăл шутран условнăй майпа айăпланисем 128 çын, условнăй майпа айăплана çул çитмен çамрăксем – 15, ĕçлесе юсанмаллисем – 29, обязательнăй ĕçсене явăçтарнисем – 13, вăл шутран çул çитмен çамрăк –1, уйрăм должноça йышăнмалла маррисем – 1.

Çак тапхăрта айăпланисене 50 çынна учетран кăлартăмăр, вăл шутран наказани вăхăчĕ тухнипе 13-ĕне, условнăй майпа айăпланин вăхăчĕ тухнă май судпа айăпланине пăрахăça кăларнипе 13 çынна. Кунпа пĕрлех çирĕпрех наказани пама тивнĕ тĕслĕхсем те çук мар. Условнăй майпа айăплана 16 çыннăн наказанине суд приговорĕпе çирĕпреххипе улăштарма тиврĕ. Айăплав срокĕ тухичченех тепĕр преступлени тунă пĕр çыннăн та суд тенкелĕ çине ларма лекрĕ, ытти тĕрлĕ сăлтавсемшĕн – 7 çыннăн.

Хальхи вăхăтра пирĕн инспекцире штатпа иккĕн шутланса тăратпăр. Мансăр пуçне кунта аслă инспектор пулса шалти службăн аслă лейтенанчĕ Ю. Столяров тăрăшать.

В. ШАПОШНИКОВ.

Вĕсем Çĕнтерĕве çывхартнă

Салтак амăшĕсем

Пĕлместĕп, пăхнă-ши эсир Раççейре Китай культурин кунĕсене уçни пирки телевиденипе пулнă передачăна. Анчах та манра Китай дуэчĕ юрланă юрă тарăн йĕр хăварчĕ. Сăмахĕсем те асрах:

«Далеко-далеко, где кочуют туманы,
Где от легкого ветра колышется рожь...»

Эпĕ астăвасса ку юрăна хăй вăхăтĕнче пирĕн артистсем юрлатчĕç. Радиопа та тăтăшах паратчĕç. Çак юрă вăрçă çулĕсенчи тата ун хыççăнхи Муркаш тăрăхĕнчи уйсене аса илтерчĕ. Ун чухне эпир алăпа çурласемпе хирте тырă выраттăмăр. Ыраш çилпеле хумлăн-хумлăн вылянине сăнама юрататтăм. Аякка-аякка сарăлатчĕç хумсем.

Мĕн пирки калатăп-ха çакна. Мĕншĕн тесен эпир вăрçă çулĕсенче хамăр аттесене курма пултарайман. Хирте хĕрарăмсем кăна вăй хуратчĕç. Хăйсене шеллемесĕр ĕçлетчĕç. Пире те çапла ĕçлеме хистетчĕç. Мĕншĕнне те ăнлантарса паратчĕç.

Халĕ ăнланатăп çакă епле пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине. Ун чухне вара, тен, ăнлансах та çитереймен.

Аса илÿ сăмхине сÿтнĕ май хĕрарăмсен бригадисем куç умне тухаççĕ. Колхозная, Красноармейская, Фронтовая, Советская, Мир, Чапаев урамĕсенче пурăннисем. Вĕсен пĕтĕм тĕллевĕ те вăл вăхăтра тырпул акса çитĕнтересси, фронта пулăшасси кăна пулнă. Хушамачĕсене асăнса пĕтерес те çук. Вĕсем питĕ нумай. Çитменние тата вĕсенчен чылайăшĕ çак куна пурăнса çитеймен те ĕнтĕ. Анчах та вĕсен паттăрлăхне манăça кăлармалла мар тесе шутлатăп.

Пирĕн республика Президенчĕ Николай Васильевич Федоров Шупашкарта анлă Атăл хĕрринче çÿллĕ çыранта Амăшĕн монументне ларттарса питĕ тĕрĕс турĕ тесе шутлатăп. Чăннипех ку пархатарлă ĕç. Республика тĕп хулинче пулнă май эпир мăшăрпа иксĕмĕр кашни килмессерен унта пулма тăрăшатпăр, хамăрăн аннесене – вăрçă амăшĕсене аса илетпĕр, çак палăк çинчен нумайччен куç вĕçертеймеспĕр.

Чун хушнипе, хăйсен пархатарлă ĕçĕпе вĕсем пире те ĕçе хăнăхтарнă, çынсен ĕçне хисеплеме вĕрентнĕ. Çĕре çити пуç тайма тивĕç эпир вĕсене уншăн. Аслă Çĕнтерӳ уявĕ ячĕпе вĕсене пурне те!

В. МАСТЕРОВ.

Свердловск облаçĕ.

Пуç таятпăр

Çывăрсамăр лăпкăн, паттăрсем!

Вăрçăра пуç хунă салтаксем
Çывăраççĕ тарăн ыйхăпа.
Çил вĕрсен кашлаççĕ йывăçсем,
Пуç таяççĕ шурă палăка.
Палăка тăрланă çăлтăрпа,
Хĕмленеççĕ шĕвĕр тăррисем.
Ун патне утаççĕ сукмакпа
Хĕлĕн-çăвĕн яланах çынсем.
Чечексем хураççĕ пĕшкĕнсе,
Шăп тăраççĕ пурте пĕр самант.
Хурланса вулаççĕ ятсене,
Ылханаççĕ вăрçăна чунтан.
Таврана сăнаççĕ паттăрсем
Палăк çинчи сăн ÿкерчĕкрен.
Ах, епле пит çамрăк сăнĕсем,
Çирĕмрен те çулĕсем иртмен!
Çакăнта хăрушă тăшманпа
Куçа-куçăн çапăçнă вĕсем.
Çĕнтерӳ кунне йăл кулăпа
Кĕтсе илеймен çеç паттăрсем...
Çил вĕрсен кашлаççĕ йывăçсем,
Хĕрлĕ çăлтăр сапалать хĕмне.
Çывăрсамăр лăпкăн, паттăрсем,
Паянхи пек ĕмĕр, малашне!

Игорь МАЙКОВ.

Кашмаш ялĕ.

Чăваш чĕлхин уявĕнче

Чăваш йăли-йĕркине упрама вĕренеççĕ

Мĕн пĕчĕкрен чăваш юрри-ташшине, вăйăи-куллине юратма, чăвашлăха упрама, чĕлхе пуянлăхне анлăлатма вĕрентеççĕ Москакассинчи "Колокольчик" ача садĕнче. Акă паян та ачасем валли чаплă та пысăк уяв хатĕрленĕ. Паян кунта чăваш чĕлхи кунне уявлаççĕ. Уява тĕплĕ хатĕрленни музыка залне кĕрсен тÿрех курăнать. Кунта илемлĕ тĕпел кукри, пысăк та илемлĕ кăмака, урайĕнче килте тĕртнĕ палассем, стена çинче тĕрленĕ кавирсем.

Юмах тĕнчине кĕнĕ пек кĕчĕç асамлă зала ачасем. Пурте чăваш кĕпи тăхăннă, хĕр ачасем шÿлкемесем çакнă. Вăйăсем вылянă чух сăпайлă та маттур, харсăр та хăюллă. Тен, çапла пулмалла хальхи чăваш ачисен.

Мĕн кăна тумарĕç çак уявра ачасем: Мăрсак ялĕнче Верук кинемейпе Иван мучи патĕнче хăнара пулчĕç, чăн чăваш вăйăисене вылярĕç, чăвашла шут сăмахĕсене тупăшса вуларĕç, сăпка юрри юрласа тĕлĕнтерчĕç, тупăшса чăваш такмакĕсене каларĕç, авалхи ăслай юмахĕсене аса илчĕç. Тĕлĕнсе те савăнса пăхса лартăмăр эпир, куракансем, çак уява.

Ачасене йĕркелесе ертсе пыраканĕ вара Г.А. Трихалкина пулчĕ. Садикри ытти воспитательсем те маттурри палăрчĕ уявра: Иван Мучи – Е.В. Миловидова, Верук кинемей – П.Г. Лебедева.

Ачасем хăйсем те пултаруллине кăтартса пачĕç. Даша Макарова, Аня Гаврилова, Люба Люцева, Паша Алексеев юмах лартса панă чух пурте савăнса пăхса лартăмăр.

Юлашкинчен Верук кинемей ачасене сĕтел хушшине чĕнсе хăналас терĕ. Ачасене ĕне ыррипе (ĕнерипе) сăйларĕ кинемей. Курма пыракансене те сăйларĕç чăн чăваш апачĕпе садикре. Çапла чăваш йăли-йĕркине упрама вĕренсе çитĕнеççĕ "Колокольчик" ача садĕнче пĕчĕк Нарсписемпе хастар Сетнерсем.

Р. СИБЯКОВА,
Москакасси ял библиотекарĕ.

Пирĕн чĕвĕлти чĕлхемĕр

Чăваш чĕлхи кунĕ ячĕпе Вăрманкасри тĕслĕх вулавăшра эрнипех чăваш чĕлхипе çыхăннă мероприятисене хутшăнтăмăр, хамăр тăван чĕлхене лайăх пĕлнине, ăна юратнине палăртса "Пирĕн чĕвĕлти чĕлхемĕр" ăмăрту ирттертĕмĕр. Икĕ командăна уйрăлса "Чăвашла лайăх каласма пĕлни", "Тупмалли юмахсен тупсăмне тупар-ха", "Пĕр саспаллирен" конкурссенче ăмăртрăмăр.

Илемлĕ сăвă вулакансен ăмăртăвĕнче Николай Петров, Ирина Федорова ыттисенчен янăравлăрах, çепĕçрех вуланине палăртмалла. Çакăн евĕрлĕ мероприятисем пире атте-анне парнеленĕ чĕлхе илемне туйма, ăна юратма, хисеплеме, унăн пуянлăхĕпе кун-çулне хаклама вĕрентеççĕ.

Çак уява йĕркелекене, Вăрманкасри тĕслĕх вулавăшра ĕçлекен Валентина Парфеньевна Афанасьевана тав сăмахĕ калатпăр.

Вăрманкасри вĕрентӳпе культура центрĕнче 3-мĕш класра вĕренекен Ирина ФЕДОРОВА.